Ной тата пĕтĕм çĕре шыв илни

Турă Сăмахĕнчи, Библири, халап

ра вырнаçнă

Пултарни 6-10

“Сирĕн Сăмахăрсен алăкĕ çутă парать.”
Псалом 119:130

19

20




21

22

Çыравçи: Edward Hughes
Иллюстрацилекенĕ: Byron Unger; Lazarus
Alastair Paterson

Куçаруçи: www.christian-translation.com
Адаптацилекенĕ: M. Maillot; Tammy S.

Утмăлăшĕнчен виççĕмĕш халапĕ

**M1914.org**

**Bible for Children, PO Box 3, Winnipeg MB  R3C 2G1  Canada**

Лицензи: сутса яриччен сирĕн çак халапа копилесе
илме е пичетлеме ирĕк пур.

23

Эпир япăх ĕççем тунине турă пĕлет.
Çылăхшăн наказани-вилĕм.

Турă пире питĕ хытă юратнăран Хăйĕн Ывăлне Иисуса Хĕрес çинче вилме тата пире наказани пама янă.  Иисус чĕрĕлнĕ те Пĕлĕте таврăннă!  Халĕ Турă пирĕн çылăхсене каçарма пултарать.

Эсир хăвăр çылăхăрсенчен пăрăнасшăн пулсан, çакна Турра калăр: Хаклă Турă, Иисус маншăн вилнине тата халĕ каллех пурăннине эпĕ ĕненетĕп. Тархасшăн, ман пурнăçа кĕр те манăн çылăхсене каçар: эпĕ çĕнĕ пурнăçпа пурăнам, кайран Вара ĕмĕрлĕхех Санпа пĕрле пулам.  Хăвăн ача пек пурăнма пулăшсам мана.  Аминь.   Иоанн 3:16

Библие вулăр та Турăпа кашни кун калаçăр!

Chuvash




1




2


Турă Ноя пĕтĕм çĕре шыв илесси пирки асăрхаттарнă. “Хăвăн çемйÿ валли тата нумай чĕр чуна вырнаçтарма çителĕклĕ йывăç ковчег, пысăк кимĕ, ту”, - тесе хушнă Ноя. Турă Ноя тĕрĕс хушусем панă. Ной ĕçе тытăннă!
3
Ной мĕншĕн ковчег тунине ăнлантарса панă чухне çынсем унран кулнă çеç.
Ной чарăнман. Вăл çынсене Турă çинчен те каласа панă. Анчах ăна никам та итлемен.
4
Нойăн çирĕп ĕненÿ пулнă. Çумăр унччен нихăçан та пулман пулин те, вăл Турра ĕненнĕ. Кĕçех ковчег хатĕр пулнă.
5
Унтан чĕр чунсем те çитнĕ. Турă çичĕ тĕрлĕ чĕр чун, унтан тата икĕ тĕрли илсе килнĕ. Кайăк-кĕшĕкĕ, тискер кайăкĕсем пысăкки те пĕчĕкки пурте ковчег патнелле туртăннă.
6
Тен, çынсем Ной чĕрчунсене тиенĕ чухне мăшкăлласа кулнă та. Вĕсем Турра хирĕç çылăх тума пăрахман. Вĕсем ковчега кĕме ыйтман та.
7
Çапла карап çине пур чĕрчунпа кайăк-кĕшĕк та пырса кĕнĕ. “Ковчега кĕр”, - тенĕ Ноя Турă. “- Эсĕ те, санăн çемйÿ те”. Ной, унăн арăмĕ, унăн виçĕ ывăлĕ тата вĕсен арăмĕсем ковчега кĕнĕ. Вара Турă алăка хупнă!
8
Унтан çумăр çума пуçланă. Вăйлă çумăр çĕре хĕрĕх кун та хĕрĕх каç пĕр чарăнмасăр йепетнĕ.
9
Шыв хуласемпе ялсене тултарнă. Çумăр чарăнсан тусем те шыв айне путнă. Сывлăшпа сывлакансем пурте вилнĕ.
10
Шыв хăпарсан, ковчег çÿлелле ишсе тухнă. Тен, шалта тĕттĕм пулнă, тен, тирпейсĕр те, тен, хăрушă та пулнă пулĕ. Анчах та ковчег Ноя шыв илесрен хÿтĕленĕ.
11
Пилĕк уйăхран Турă типĕтекен çил янă. Ковчег майĕпен Арарат çуллĕ тăвĕ çинче чарăнса тăнă. Ной шыв чакичченех шалта тата хĕрĕх кун кĕтнĕ.
12
Ной ковчегăн уçă чÿречинчен ула куракпа кăвакарчăна янă. Канма типĕ вырăн тупайманнипе кăвакарчăн Ной патне таврăннă.
13
Тепĕр эрнерен Ной тепĕр хут хăтланса пăхнă. Кăвакарчăн хăйĕн сăмсинче ешĕл олива çулçи илсе килчĕ. Тепĕр эрнере Ной çĕр типсе ларнине пĕлнĕ, мĕншĕн тесен кăвакарчăн таврăнман.
14
Турă Ноя ковчегран тухма вăхăт çитнĕ тесе каланă. Нойпа унăн çемйи чĕрчунсене кăларнă.
15
Ной çав тери савăплă пулнă! ăна та, унăн çемйине те шыв илнинчен çăлса хăварнăшăн вăл Турра тав туса алтарь тунă та пуççапнă.
16
Турă Ноя çирĕп сăмах панă. Этеме сылăхĕсемшĕн суд тумашкăн Вăл урăх нихăçан та пĕтĕм çĕре шыв ямĕ.
Турă хăйĕн сăмахне яланах асра тытнă. Асамат кĕперĕ турă сăмах панине пĕлтернĕ.
17
Нойпа унăн çемйи çĕре шыв илнĕ хыççăн çĕнĕ пурнăç тума тытăннă. Вăхăт иртнĕçемĕн унăн тăхăмĕ çĕнĕрен пĕтĕм çĕре вырăнаçса тултарнă. Тĕнчери пур халăх та
Нойпа унăн ачисенчен çуралнă.
18